# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА



## 30 тунти кун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.10, 3.00 Новости
9.20, 4.20 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Сегодня вечером» 16+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ТЕСТ НА БЕРЕМЕННОСТЬ» 16+
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.25, 3.05 Х/ф «КАБИНЕТНЫЙ ГАРНИТУР»
3.30 Т/с «ИЗМЕНА» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.25, 21.00 Т/с «ТИХИЙ ДОН» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
23.55 «Честный детектив» 16+
0.55 Ночная смена. «Россия без террора. Татарстан. Испытание на прочность» «Прототипы. Гоцман» 16+
2.25 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
21.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «КОМАНДА» 16+
2.00 «Следствие ведут...» 16+
3.00 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Çĕнĕ кĕнеке**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 От 2 до 5**
**18.29 Библия сегодня**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 1 ытлари кун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20, 4.25 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «ТЕСТ НА БЕРЕМЕННОСТЬ» 16+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Структура момента» 16+
1.35, 3.05 Х/ф «КАПОНЕ» 16+
3.35 Т/с «ИЗМЕНА» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТИХИЙ ДОН» 12+
23.55 Вести.doc 16+
1.35 Ночная смена. «Другой атом» «Смертельные опыты. Электричество» 12+
3.10 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
4.05 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Утренний гость. Премьера (на чувашском языке)**
**9.35-9.55 Вспомни, солдат. Премьера (на чувашском языке)**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чă!ваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
21.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «КОМАНДА» 16+
2.00 Главная дорога 16+
2.35 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юрă çаврăмĕ**
**6.31 Певец земли чувашской**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Вăрçă ачисем**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 2 юн кун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.20 «Контрольная закупка»
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 21.35 Т/с «ТЕСТ НА БЕРЕМЕННОСТЬ» 16+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Политика» 16+
1.35, 3.05 Х/ф «ИСТОРИЯ АНТУАНА ФИШЕРА» 12+
4.00 Т/с «ИЗМЕНА» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТИХИЙ ДОН» 12+
23.55 Специальный корреспондент 16+
1.35 Ночная смена. «Судьба. Закон сопротивления» 12+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
21.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «КОМАНДА» 16+
2.00 Квартирный вопрос 0+
3.05 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Хамăр ял**
**6.34 Имею право**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.26 Диалоги о школе**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Чĕрĕ шыв**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 3 кĕçнерни кун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 15.00, 18.00, 0.40, 3.00 Новости
9.20, 4.15 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.15 «Модный приговор»
12.00 Ежегодное послание Президента РФ В.В. Путина Федеральному Собранию
13.10, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
22.00 Т/с «ТЕСТ НА БЕРЕМЕННОСТЬ» 16+
0.00 «Вечерний Ургант» 16+
0.55, 3.05 Х/ф «ХОРОШИЙ ГОД» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 13.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
12.00 Ежегодное послание Президента РФ В. В. Путина Федеральному Собранию
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «ТИХИЙ ДОН» 12+
23.00 «Поединок» 12+
0.40 Ночная смена. «Дмитрий Донской. Спасти мир» «Тамерлан. Архитектор степей» 12+
2.40 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Народная артистка. Нина Яковлева. Премьера**
**9.20 Семейный портрет в интерьере**
**9.40-9.55 Сельская жизнь (на чувашском языке)**
**11.35-12.00 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
21.35 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ЧЕТВЕРТАЯ» 16+
23.30 «Анатомия дня»
0.10 Т/с «КОМАНДА» 16+
2.00 «Дачный ответ» 0+
3.05 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Юхма енĕм – Патăрьел**
**6.31 Спорт площадки**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 4 эрне кун

### 1 КАНАЛ
5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20, 5.00 «Контрольная закупка» 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55, 4.00 «Модный приговор»
12.15 Т/с «ТЕСТ НА БЕРЕМЕННОСТЬ» 16+
14.30, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос» 12+
23.55 «Вечерний Ургант» 16+
0.55 «Городские пижоны» «Фарго» 18+
2.05 Х/ф «МЕЛИНДА И МЕЛИНДА» 16+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 «Наш человек» 12+
16.00 Т/с «ЗЕМСКИЙ ДОКТОР» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 «Юморина» 12+
23.00 Х/ф «РАДИ ТЕБЯ» 12+
3.00 Горячая десятка 12+
4.05 Комната смеха

### ЧТВ
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Доступная среда. С сурдопереводом**
**9.20-9.55 Телеюрă. Премьера**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.00, 6.05 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
7.00 «НТВ утром»
8.10 «Утро с Юлией Высоцкой» 12+
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.20 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «ДЕД МАЗАЕВ И ЗАЙЦЕВЫ» 16+
23.20 «Большинство»
0.20 «Время Г» с Вадимом Галыгиным 18+
1.00 Х/ф «КОММУНАЛКА» 16+
2.55 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
11.30 Х/ф «ДЕНЬ РАДИО» 16+
13.35 «Комеди клаб» 16+
14.00 Т/с «РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ» 16+
14.30, 15.00, 16.00, 17.00, 18.00, 19.00, 19.30 «Однажды в России» 16+
20.00 «Comedy Woman» 16+
21.00 «Комеди Клаб» 16+
22.00 «Comedy Баттл. Последний сезон» 16+
23.00 «Дом-2. Город любви» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.25 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 5 шăмат кун

### 1 КАНАЛ
5.50, 6.10 Т/с «ОБМАНИ, ЕСЛИ ЛЮБИШЬ» 16+
6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Нина Русланова. Гвоздь программы» 12+
12.10 «Идеальный ремонт»
13.10 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 «Теория заговора» 16+
14.50 «Голос» 12+
17.10 «Следствие покажет» с Владимиром Маркиным 16+
18.10 «Кто хочет стать миллионером?»
19.10 Большой праздничный концерт в Кремле
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?» Зимняя серия игр
0.15 Х/ф «АВГУСТ» 12+
2.30 Х/ф «МАЛЬЧИШНИК» 16+
4.30 «Модный приговор»
5.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
4.50 Х/ф «ТРАКТИР НА ПЯТНИЦКОЙ» 12+
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 Мульт утро
9.30 «Правила движения» 12+
10.25 «Личное. Александр Михайлов» 12+
11.20 «Две жены» 12+
12.20, 14.30 Х/ф «Я БУДУ ЖДАТЬ ТЕБЯ ВСЕГДА» 12+
16.45 «Знание - сила»
17.35 «Главная сцена»
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «МЕЗАЛЬЯНС» 12+
0.50 Х/ф «ЛЮБОВЬ И РОМАН» 12+
2.50 Х/ф «СУМАСШЕДШАЯ ЛЮБОВЬ» 12+
4.45 Комната смеха

### ЧТВ
**8.10 Вести-Чăваш ен**
**8.20-9.30 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ
4.40 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
5.35 Т/с «ШЕРИФ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Жилищная лотерея Плюс» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.20 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 Кулинарный поединок с Дмитрием Назаровым 0+
11.55 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею!» 16+
14.15 Своя игра 0+
15.05 «Голодание». «Еда живая и мертвая» 12+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 «50 оттенков. Белова» 16+
23.00 Х/ф «ВЛЮБЛЕННЫЕ» 16+
1.00 Д/с «СССР. Крах империи» 12+
3.05 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
23.35 Х/ф «УКРАДИ МОЮ ЖЕНУ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕçерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 6 вырсарни кун

### 1 КАНАЛ
5.50, 6.10 Т/с «ОБМАНИ, ЕСЛИ ЛЮБИШЬ» 16+
6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Барахолка» 12+
13.10 «Гости по воскресеньям»
14.10, 15.15 Бенефис Геннадия Хазанова 16+
16.45 «Геннадий Хазанов. Без антракта» 12+
17.50 «Точь-в-точь» 16+
21.00 Воскресное «Время»
23.00 Х/ф «МЕТОД» 18+
0.00 Х/ф «БОСИКОМ ПО МОСТОВОЙ» 16+
2.10 Х/ф «БУЧ И САНДЭНС: РАННИЕ ДНИ» 12+
4.20 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.30 Х/ф «ВСЕ, ЧТО ТЫ ЛЮБИШЬ...» 12+
7.30 «Сам себе режиссер»
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.10, 14.20 Х/ф «ПРАВО НА ЛЮБОВЬ» 12+
16.00 «Всероссийский открытый телевизионный конкурс юных талантов «Синяя Птица»
18.00 Х/ф «ЖЕНА ПО СОВМЕСТИТЕЛЬСТВУ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.00 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.55 Х/ф «ПОЦЕЛУЙ БАБОЧКИ» 16+
3.00 «Русская Аляска. Продано! Тайна сделки» 12+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ
**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ
5.00 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.05, 1.10 Т/с «ШЕРИФ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 «Поедем, поедим!» 0+
14.10 Своя игра 0+
15.00 «НашПотребНадзор» Не дай себя обмануть! 16+
16.20 Т/с «ЛИТЕЙНЫЙ» 16+
18.00 «Акценты недели»
19.00 «Точка» с Максимом Шевченко
19.45 Т/с «ПАУТИНА» 16+
23.40 «Пропаганда» 16+
0.15 Х/ф «АНГОЛА: ВОЙНА, КОТОРОЙ НЕ БЫЛО» 16+
3.00 Т/с «ДВОЕ С ПИСТОЛЕТАМИ» 16+
20.00 «Где логика?» 16+
21.00 «Однажды в России» 16+
22.00 «Stand Up» 16+
23.00 «Дом-2. Город любви» 16+
0.00 «Дом-2. После заката» 16+
1.00 Х/ф «КИНО ПРО АЛЕКСЕЕВА» 12+
2.55 Х/ф «КАК МАЛЫЕ ДЕТИ» 16+
5.40 «Женская лига» 16+
6.00, 6.30 М/с «Турбо-Агент Дадли» 12+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Çыравçăсем – ачасем валли**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри – мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Хĕрлĕ кăшманпа купăста салачĕ

**2 кишĕр, 1 хĕрлĕ кăшман, 1/4 пуç купăста, 1 хăяр, тăвар, симĕс сухан, тип çу кирлĕ.**

Хĕрлĕ кăшмана пĕçермелле. Кишĕрпе хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Купăстана, симĕс сухана вĕттĕн турамалла. Хăяра тăваткалласа касмалла. Çимĕçсене тип çупа пăтратмалла, тăвар сапмалла.

### Тăпăрчпа кишĕр катлечĕ

**3 кишĕр, 200 грамм тăпăрч, 2 апат кашăкĕ сахăр, 70 грамм исĕм, 50 грамм курага, 50 грамм хура слива, 50 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 1 апат кашăкĕ манна кĕрпи, ванилин, тип çу кирлĕ.**

Курагапа хура сливăна пĕрчĕлесе касмалла. Аçтăрхан мăйăрне вĕтетмелле.

Теркăланă кишĕре тăпăрчпа пăтратмалла, типĕтнĕ улма-çырла, манна кĕрпи, сахăр, ванилин хушмалла. Çак хутăшран катлет тумалла, ылтăн тĕс çапиччен тип çупа ăшаламалла.

### Мăйăр печенийĕ

**3/4 стакан çăнăх, 1 стакан сахăр, 1 стакан аçтăрхан мăйăрĕ, 3 çăмарта, тип çу кирлĕ.**

Çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн пăтратса кăпăклантармалла, çăнăх, вĕтетнĕ мăйăр, сахăр хушса чуста çăрмалла. Печение духовкăра пĕçермелле, çулăма сӳнтерсен тăваткалласа касмалла.

### Банан кукăлĕ

**150 грамм тăпăрч, 2 çăмарта, 120 грамм сахăр, 120 грамм çăнăх, 60 грамм услам çу, ванилин, 1 чей кашăкĕ лимон хуппи, 0,5 чей кашăкĕ апат соди, 1 банан, 1 киви кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла. Тăпăрча услам çупа, çăмарта хутăшĕпе пăтратмалла, ванилин, апат соди, лимон хуппипе çăнăх хушмалла, çаврашкан каснă бананпа киви ямалла. Кукăле духовкăра 35 минут пĕçермелле.

### Кавăн хăпартăвĕ

**500 грамм тăпăрч, 200 грамм рис, 1,5 килограмм кавăн, 3 çăмарта, 100 грамм услам çу, ванилин, 2 апат кашăкĕ сахăр, 100 грамм исĕм, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă кавăна услам çупа пăшăхламалла, тӳмелле. Исĕме шӳтермелле, риса пĕçермелле.

Тăпăрча 2 çăмартапа, сахăрпа, ванилинпа пăтратмалла.

Тип çу сĕрнĕ çатмана сийлесе /рис – исĕм – тăпăрч – кавăн нимĕрĕ/ хумалла. Çиелтен услам çупа, пăтратса кăпăклантарнă çăмартапа витмелле. Хăпартăва духовкăра пĕçермелле.

### Чăх паштечĕ

**400 грамм чăх пĕверĕ, пусăлă 1 сухан, 50 грамм салă, 50 грамм услам çу, 1 кишĕр, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă салăна ăшаламалла, пĕвер, пĕрчĕлесе каснă кишĕр, вĕтетнĕ сухан, тăвар, пăрăç хушмалла. Çак хутăша 15 минут пăшăхламалла. Унтан блендерпа вĕтетмелле, услам çу ямалла. Паштет сивĕ çĕрте хăвăртах хытать.

### Витамин хутăшĕ

**1-ер стакан исĕм, курага, аçтăрхан мăйăрĕ, пыл, 2 лимон кирлĕ.**

Исĕме, курагана, мăйăра аш арманĕ витĕр кăлармалла. Вĕри шыва чиксе кăларнă лимона вĕттĕн турамалла. Ăна мăйăр хутăшĕпе, пылпа пăтратмалла. Талăкне 2-шер апат кашăкĕ çимелле.

### Кавăн варенийĕ

**3 килограмм кавăн, 1 килограмм сахăр, 500 грамм курага, 1 лимон кирлĕ.**

Аш арманĕ витĕр кăларнă кавăнпа курагана 45 минут пĕçермелле, сахăр хушмалла. Çулăма сӳнтериччен 5 минут маларах авăртнă лимон хушмалла.

### Пулă катлечĕ

**500 грамм пулă фаршĕ, 1 кишĕр, пусăлă 1 сухан, 1 çăмарта, сĕт, 1 татăк батон, 2 апат кашăкĕ манна кĕрпи, тăвар, пăрăç, вĕтетнĕ сухари, тип çу кирлĕ.**

Батона сĕтпе йĕпетмелле. Суханпа кишĕре вĕттĕн турамалла. Пулă фаршне суханпа, кишĕрпе, батонпа, çăмартапа, тăварпа, пăрăçпа, манна кĕрпипе пăтратмалла. Çак хутăшран катлет тумалла. Кашнине сухарипе йăваламалла, ылтăн тĕс çапиччен тип çупа ăшаламалла.

ЁНЕНЕТĔР-И Е ÇУК-И?

# Сирĕн килте хăтлă-и?

*Сирĕн килте епле энергетика хуçаланать? Хăтлă-и? Çакна пĕлме темиçе сăнав ирттерме пулать.*

Лайăх килте, сăмахран, тăкăннă шыв вăрах типет, чӳлмекри чечек часах шанмасть, металл япаласем – сивĕ, йывăççисем – кăштах ăшă.

"Хура" пӳртсенче вара ӳкнĕ укçа янрамасть, сĕт хăвăртрах йӳçет, вĕри шыв часах сивĕнет, тăвар шывра – часах, çу куç умĕнчех ирĕлет, çурта вĕтеленсе çунать, сӳнет.

Килти энергетикăна маятникпе тĕрĕслеме юрать. Ăна хатĕрлеме кĕмĕл те, пăхăр та, хрусталь та юрăхлă – япала сирĕн çеç пултăр. "Çак вырăн лайăх-и?" тесе ыйтмалла. Маятник малтан-каялла силленсен – "лайăх" тенине пĕлтерет, сылтăмран сулахаялла – çук.

Япăх лаптăксене тасатас тесен унта электричество хатĕрĕсем лартма юрать, анчах – кĕнеке мар. Вĕсем энергетикăна çăтĕç те вуланă чухне хуçине куçĕç. Кун пек вырăнсене ăвăс, юман, хурăн, чăрăш тураттисем хумалла. Вĕрене, çĕмĕрт, шĕшкĕ тата уртăш тураттисем ăна тасатма çеç мар, ырăлатма та пулăшĕç. Вĕсене хушăран çĕнетмеллине манмалла мар çеç. Каçхине стаканпа шыв лартма юрать. Унта кĕмĕл япала е çăмарта яни те витĕмлĕ. Ирхине шыва тухса тăкмалла.

Килте лăпкăлăх, канлĕх, тасалăхпа хăтлăх хуçаланччăр тесен хамăрăн та çаплах пулмалла, мĕншĕн тесен пирĕн шухăш-кăмăл, туйăм пĕтĕмпех сĕтел-пукана, япаласене, стенасене, чечексене куçать. Ятарлă савăт туянма юрать. Калăпăр, чӳлмек. Мĕнпур япăххине шухăшпа унта пушатмалла. Чӳлмек тулнине туйсан ăна ывăтмалла та çĕннине туянмалла.

Япăх кăмăлпа çывăрма выртма та юрамасть. Кун пек эсир канаймăр. Çавăнпах кăмăла уçма интереслĕ кĕнеке вуламалла, кино пăхмалла, юрă-кĕвĕ итлемелле.

Кирлĕ мар, кивĕ, усă курман япаласенчен хăтăлма та ан ӳркенĕр. Пĕр-пĕр япала пурнăçра ăнăçманнипе çыхăннă-и? Ăна та шелсĕр ывăтăр.

Кăмăл уйрăмах япăх чухне кĕпер урлă утса тухма е пĕчĕк юханшыв урлă каçма тăрăшăр. Юхакан шывăн хăйне евĕрлĕ энергетика. Вăл сире япăххинчен уйрălma пулăшĕ.

Уйрăм çуртра пурăнакансене карта çине кивĕ пушмак çакма сĕнеççĕ. Вăл кашнин куçне тăрăнĕ те килен-каяна энергетикине туртĕ. Хваттерте вара ку тĕллевпе алăка хирĕç çăпата çакма юрать.

Пирĕн çурт апат çисе çывăрмалли вырăн çеç мар, вăл – пирĕн кил. Пире унта хăтлă пулмалла.

АСРА ТЫТМА

# Тутлă мунча

*Мунча кĕнĕ чухне эфир тĕрлĕ çăвĕпе усă курма тăрăшăр. Çур литр шыва 3-5 тумлам çу ямалла та унпа ăшши памалла. 5-10 минутран мунчара тутлă шăршă сарăлĕ.*

*Эфир çăвĕсем тĕрлĕ витĕм кӳнине те шута илмелле.*

**Лимон** хушни пуç ыратнине ирттерет, иммун тытăмне çирĕплетет;

**Бергамот** юн пусăмне йĕркене кĕртет;

**Хыр çăвĕ** тип пырта сывлăш пӳлĕннинчен пулăшать;

**Салтак тӳми** /ромашка/ тĕрлĕ сурана сиплет, сунасран "хăтарать";

**Эвкалипт** кĕлетке температурине чакарать.

БЙИТУ – ХУРАВ

# Алимент тӳлемесен...

**Упăшка темиçе çул алимент тӳлемест. Унран штраф шыраса илме пултаратпăр-и?**

**С.КАПИТОНОВА.**
Шупашкар хули.

РФ Çемье кодексĕн 80 статйипе килĕшӳллĕн, ашшĕ-амăшĕн çул çитмен ачине пăхмалла-тивĕçтермелле. 113 статьян 4 пайĕпе килĕшӳллĕн, алимент тӳлемен тапхăрти виçене ĕç укçине е урăх тупăша кура палăртаççĕ. Палăртнă тӳлеве çын хăйĕн ирĕкĕпе памасан куллен тӳлемелли пурлăхăн 0,5 процентне суд йышăнăвĕпе шыраса илме май пур.

Алиментпа штраф шыраса илмелли ыйтăва çул çитмен ачан саккунлă представителĕ те çырма пултарать, анчах шырса илекенĕ ача шутланать. Çавăнпах ачапа пĕр килте регистрациленнĕ тĕк суда хăвăр пурăнакан адреспа каймалла. Хут тăрăх ача пĕр вырăнта, эсир урăх вырăнта тĕпленнĕ тĕк – пепке пурăнакан адреспа.

Асăннă тĕслĕхре прокуратура çул çитмен ача интересĕсене хӳтĕлесе суда тухнă. Суд прокуратура ыйтăвне тивĕçтерсе Ю.Капитоновран штраф шыраса илме йышăннă.

**Людмила БУСОВА,
Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕн аслă пулăшуçи.**

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Суйласа çитермелле

Ку вăхăтра выльăх ӳсме пăрахать те çу хушма тытăнать – какай сĕтеклент, тутланать. Тути вара выльăха мĕн çитернинчен килет. Çуллă, çемçе какай илес тесен çуллă апат кирлĕ. Углеводпа белок парсан какай хытă пулать.

Куккурус, сĕлĕ, çĕрулми, шывлă апат çиекен выльăхăн какайĕ – çемçе, пăрса, кăшман, урпа çиекенсен какайĕ те, çăвĕ те – пысăк пахалăхлă пулать. Çакă пĕрремĕш ушкăна кĕрекен апата выльăха самăртнă вăхăтăн малтанхи, иккĕмĕшсене кайранхи тапхăрта çитермеллине пĕлтерет.

## Качакана та ăшă кирлĕ

Пăранлама хатĕрленекен качакана ыттисенчен уйăрса кăкарсан та юрать. Çакă ыттисем пĕтĕ амана хырăмĕнчен сĕксе путеке амантасран сыхлать. Усă сывлăша куллен кăларса усăлтарни те пăсăк мар.

Качака витинче выльăха выртма çӳлĕксем вырнаçтарнă тăк хĕлле вĕсене илсен те юрать. Сивĕ çанталăкра качакана утă-улăм çинче выртма ăшăрах, анчах та вăл йĕпе ан пултăр. Тислĕк шывне пухма уйрăм шăтăк тусан та юрать. Качака каяшĕ пахча валли паха имçам. Вăл азотпа пуян.



## Сысна çури ан аптăратăр

Сысна усракансем чылай чухне ăна апат юлашкине параççĕ. Анчах асăрханмалла. Сысна çурисене пулă шăмми те, кăвакарнă çăкăр та юрамасть. Пĕчĕкскерсен апатне супăнь шывĕ тата сиенлĕ ытти япала лекесрен те сыхланмалла. Апат юлашки йӳçĕхнĕскер ан пултăр. Унсăрăн сысна аптăрама пултарать. Çурасене пĕçернĕ утă-улăм хушнă çĕрулми нимĕрĕпе апатлантарсан аван. Ăна шăпах апат юлашкипе шĕвветмелле те.

ШУТА ИЛМЕ

## Эмел витĕмĕ

Тара пула сарăхнă шурă кĕпене çуса тасатма аспирин пулăшать. Çур стакан шывра икĕ тӳме ирĕлтермелле. Кĕпене икĕ сехетлĕхе эмел хутăшне чиксе лартмалла.

## Сивĕтмĕше усçан

Ырă мар шăршă кĕрет-и? Çӳлĕк çине хуппинчен тасатнă çур сухан хумалла. Хура çăкăр чĕлли те ырă мар шăршăран хăтăлма пулăшать.

ЧĂН ПУЛНИ

# Юратса пĕрлешрĕмĕр, килĕшӳпе пурăнтăмăр



Тепĕр кунах ĕçрен ирĕк ыйтса 10 кунлăх тăванĕ патне кайрĕ. Хаваслă таврăнчĕ ашшĕ патĕнчен. Хĕре вăл илемлĕ çитсă кĕпе тăхăнтартса янăччĕ.

Савса-хавхаланса пурăннă май вăхăт иртни сисĕнмерĕ. Çурхи пĕр кун Настя çуралнă кунне уявлама чĕнчĕ. Ĕç хыççăн хăнана кайрăм. Парнелĕх куçлă-куçлă тутăр туянтăм. Ĕçмелли-çимелли – сĕтел тулли. Пурте: Тоняпа Юля, эпĕ, Настя – сĕтел хушшине вырнаçрăмăр. Настя хуçа пулса пĕчĕк стакансене эрех тултарчĕ, ĕçме сĕнчĕ. Эпĕ ăна çĕнĕ тутăр çыхтартăм. Çав каç киле каймарăм – Настя юнашар вырттарчĕ. Çĕрĕпех ыталанса, чуптуса выртрăмăр. Аскăн ĕç тума та кăмăлсем пурччĕ – юрамасть. Хирĕçех Тоняпа Юля вырта́ççĕ.

Салтакран 1953 çулхи кĕркунне таврăнтăм. Районти çар комиссариатĕнче сĕтел хушшинче ларакан аслă лейтенант манăн документсене пăхса тухсан çыруçă кирлине пĕлтерчĕ. Килĕшрĕм. Шăхасанти çар комиссариатĕнче нумай вăхăт ĕçлеме май килмерĕ. 1954 çулта ăна Канаш районĕнчипе пĕрлештерчĕç. Хăта Николай Павлов Шупашкарта милицире ĕçлетчĕ. Эпĕ ĕççĕррине пĕлсен мана хăйпе илсе кайрĕ.

Кадрсен пайĕнче мана милицин Сосновкăри уйрăмне ярасса пĕлтерчĕç. Вырăна ĕç вăхăчĕ вĕçлениччен çитрĕм. «Эпир сире паçăрах кĕтетпĕр, сирĕн çинчен шăнкăравласа пĕлтерчĕç», – терĕ Порфирий Михайлов капитан. Пурăнма вырăн çуккине каласан пуçлăх сĕтел сунтăхĕнчен çăра уççи кăларса тыттарчĕ. Юнашарти икĕ хутлă çуртăн тăваттăмĕш пӳлĕмне вырнаçма, ирхине 8 сехет валли ĕçе килме хушрĕ.

Кун хыççăн кун, эрнесем, уйăхсем иртрĕç. Пĕр канмалли кун электростанци культура керменне кино курма кайрăм. Пушă вырăн шыраса икĕ хĕр çумне вырнаçрăм. Юнашар лараканни ман енне темиçе те çаврăнса пăхрĕ. Эпĕ те. Анчах сăмах чĕнмерĕмĕр. Урама тухсан хăюлăх çитерсе ăна килне ăсатма сĕнтĕм. Хирĕçлемерĕ. Алла-алăн тытăнса утрăмăр çапла. Нумай та каяймарăмăр – çитрĕмĕр. Çурт умĕнчи сак çинче чылай вăхăт калаçса лартăмăр.

Настя каласа кăтартнинчен çакă паллă пулчĕ. 1940 çулта ашшĕ Иван Петров килĕнчен тухса кайнă та çухалнă иккен. Çăмăл пулман çемьене. Икĕ çултан амăшĕ те вилнĕ. Тăлăха юлнă виçĕ ачана амăшĕн аппăшĕ Анна Александровна пăхса ӳстернĕ. Хăйсен килĕнчех пурăннă вĕсем. Хĕллехи вăхăтра кил-çуртне ăшăтас тесе картишĕнчи вите тăрринчи улăма сӳтсе çунтарнă. Тем вăхăтран пĕртен-пĕр качаки çухалнăран сĕтсĕр тăрса юлнă ачасем. Амăшĕн пир-авăрне те вăрланă такамсем. Тăлăхсене хĕрхенсе ял канашĕнче ĕçлекен кӳрши Настьăна паспорт илме пулăшнă. Çапла хĕр хулана килнĕ те Сосновкăри хăма çуракан завода вырнаçнă.

Кăвак куçлă, çаврака питлĕ, сарă çивĕтлĕ пике манăн кăмăла килчĕ. Сăнĕпе кăна мар, кăмăлĕпе те хитреччĕ вăл. Хăй те мана килĕштеретчĕ. Каçсерен иксĕмĕр юнашар ларса калаçаттăмăр, ĕмĕтленеттĕмĕр.

Пĕррехинче дежурствăра ларнă чухне Настя ашшĕ пирки каланине аса илсе шырав уйрăмне унăн ячĕпе çыру ятăм. Хурав нумай кĕттермерĕ. Настя ашшĕ тупăннă хыпара епле йышăнасса чухламанран асăрханса каларăм кун пирки, çырăва тыттартăм. Вăл хĕпĕртенĕрен мана хĕрсен умĕнчех чуптурĕ.

Пĕррехинче, çанталăк кĕр еннелле сулăнсан, хăма çуракан заводри чылай хĕре Мари Республикинчи Ермучаш ялĕ çывăхне илсе кайрĕç. Ирхине Настя мана пӳлĕм уççине парса хăварчĕ. Çĕрле кантăк умĕнче машина чарăннă сасăпа вăрантăм. Минут иртмерĕ – алăка шаккарĕç. Настя сассине илтсен çутă çутрăм та алăка уçрăм. Хĕр сиксе чĕтрет. Ĕçе çӳрекен çи-пуçне хывса çаксан Настьăна утиялпа чĕркерĕм. Чей вĕретме лартрăм. Юнашар вырнаçса: «Настя, шăнса пăсăласран та, чирлесрен те хăрамарăн-им? Вутă тиенĕ машина кузовĕ çинче тăрса килме кам хушнă сана?» – терĕм. «Сана курассишĕн килтĕм», – хуравларĕ вăл.

Чей те ĕçрĕмĕр – вăл çаплах чĕтрет. «Витали, тумбочкăн аялти хутĕнче эрех пулмалла, илсе кил-ха», – терĕ. Ăна Настьăна пĕчĕк стакана ярса ĕçтертĕм. Мана та сĕнчĕ. Çапла иксĕмĕр кĕленчене пушатрăмăр. Майĕпен ăшăнчĕ савни. Настьăпа яланхиллех юнашар выртрăмăр. Никам та çуккипе усă курса пĕр-пĕрне юратса çӳренĕ хушăра пĕрремĕш хутчен аскăн ĕç турăмăр çав каç.

Çакăн хыççăн чылай вăхăт иртрĕ. Пĕррехинче Настя мана çие юлнине пĕлтерчĕ. Иксĕмĕр тӳрех ял канашне кайса çырăнтăмăр, чиркӳре венчете тăтăмăр. Арăма пурăнма хамăн хваттер-пӳлĕме илсе кайрăм. Каç пулсан иксĕмĕр пĕрлешнĕ ятпа пĕчĕк туй турăмăр.

Пирĕн юрату кунран-кун вăй илчĕ. Савса пурăннă май вăхăт иртни сисĕнмерĕ. Эпир мăшăрпа çирĕп çемье çавăрса 53 çул пурăнтăмăр, пилĕк ача çуратса ӳстертĕмĕр. Пирĕн ултă мăнук, кĕçĕн мăнуксем те – çиччĕ. Вĕсемпе савăнса пурăнтăмăр. Мăшăрăмпа тĕпренчĕксене юратура ӳстернĕ, сăпайлă та ĕçчен, таса та тӳрĕ чунлă, ырă кăмăллă пулма вĕрентнĕ, пурне те аслă пĕлӳ илме пулăшрăмăр. Халĕ вĕсем пурте ĕçлеççĕ, хваттерсенче тĕпленчĕç. Канмалли кунсенче, уяв кунĕсенче Никоновсен çурчĕ ĕç шавĕпе, савăк кулăпа тулать.

Эпир Наçтаçпа сăра-эрехпе иртĕхмен, хам ĕмĕрте çăвара пирус та хыпса курман. Юратнă мăшăра Наçтаçа та пӳрнепе те тĕртмен, сив сăмах каламан. Шел, мăшăр йывăр чире пула хăйĕн 80 çулхи юбилейне кĕтсе илеймерĕ. Пилĕк ача пăхса ӳстернĕшĕн Анастасия Ивановнăна «Ача амăшĕн мухтавĕ» II степень медальпе наградăларĕç. Вăрçă çулĕсенче тата ун хыççăнхи юбилей медалĕсем те чылай. Манăн та вăрçă çулĕсенче хастар ĕçленĕшĕн панисем пур.

**В.НИКОНОВ.**
Шупашкар хули.

АХ, АНЧАХ...

# Итлемерĕм аннене

Вуннăмĕш класа çитсен Кĕтерука амăшĕ клуба кашни шăматкун тухма ирĕк пама тытăнчĕ. Малтанах хушăран пĕрре çеç тивĕçетчĕ кун пек парне. Çапла тусĕсемпе пĕрлех хĕр те чăтăмсăррăн эрне вĕçне кĕтекен пулчĕ. Çамрăк чухнехи савăнăç мари çакă? Ташă каçĕ, каччăсем-хĕрсем...

Петĕре, паллах, палламан мар Кĕтерук. Анчах ялăн тепĕр вĕçĕнче пурăнаканскерпе халиччен сăмах хушманччĕ. Тепĕр тесен, вунă çул аслăрахскерпе мĕн калаçмалли пур Кĕтерукăн? Пĕр каçхине вара каччă хĕре килне ăсатма кăмăл турĕ. Килĕшмерĕ пике, анчах йĕкĕт хĕрсен ушкăнĕнчен пĕр утăм та юлмарĕ. Виçĕ тус та пĕр урамрах пурăнаççĕха, анчах Кĕтеруксен çурчĕ чи аякри. Шикленнĕччĕ хĕр. Халиччен ăна никам та хапха умне çитермен-çке. Аслисем курсан тата мĕн каламалла? Анчах кăлăхах сехрине хăпартрĕ вăл, Петĕр ăна хапха умне çитерчĕ те тепĕр эрнеччен сывпуллашса каялла утрĕ. Тинех лăш пулчĕ Катя чĕри.

Тепĕр эрне те, уйăх та сисĕнмесĕрех иртрĕ. Ялта чухне Петĕр Кĕтерука кашнинчех клубран ăсатрĕ. Хĕр ăна майĕпен хăнăхса пычĕ-тĕр, ун-кун пирки калаçакан та пулчĕç иккĕшĕ. Аякри хулана ĕçлеме çӳрекенскер хушăран хăйĕн тивĕçне пурнăçлаймарĕ. Куншăн кулянмарĕ Кĕтерук. Тунсăхламарĕ. Сахал-и каччă? Авă кӳршĕ ялтан çӳрекенскерсем тусĕсене куç хывнă. Кĕтерука килĕшекенни те пур вĕсен хушшинче.

Пĕррехинче шăпах çав яш ташша чĕнчĕ те, хирĕçлемерĕ пике. Хĕпĕртерĕ çеç. Анчах унччен те пулмарĕ, такам хыçалтан карт! туртрĕ ăна. Петĕр иккен. Мускавран паян çитнĕ курăнать. Ытти чухне яка çӳрекенскер хырăнма та ĕлкĕреймен – шăматкун иккенне шута илсе Катьăна курма васканă.

– Астуса юл: сана никама та памастăп, – терĕ те çирĕппĕн савнине ташша чĕнекене клуб хыçне илсе тухрĕ.

Килне ăсатнă чухне вара Кĕтерука юратнине, хĕр шкул пĕтерсен ăна качча илме ĕмĕтленнине пĕлтерчĕ. Пулас мăшăрне эрнере пĕрре çеç курнипе çырлахас килменнине, унăн сассине куллен илтес килнине пĕлтерчĕ. Хапха умне çитсен çавăнпах кĕсье телефонĕ парнелерĕ. Турткаланчĕ пике, кун пек хаклă парнене илме хăймарĕ. Анчах Петя çирĕп тăнине кура илмех тиврĕ.

Куллен ăшă сăмахсем çырчĕ Петĕр. Катя вĕсене вăрттăн вуларĕ-хуравларĕ. Ашшĕ-амăшне телефон пирки калама ниепле те хăймарĕ. Çывăх çыннисем тĕпренчĕкĕ аслă йĕкĕтпе çӳренине ырлас çуках. Ара, шкултан вĕренсе тухса аслă пĕлӳ илмелли пирки çемьепе апата ларсан куллен калаçаççĕ. Аслă хĕрне тухтăра вĕрентсе кăларма ĕмĕтленеççĕ-çке вĕсем.

Анчах пĕр кунхине амăшĕ минтер айĕнчи тупрана курчех. Вуннăмĕш класс пĕтерекенсен экзамен тытмалла маррине шута илсе вĕсене каникул пуçлансан шкул пахчинче ĕçлеме чĕнсе илнĕччĕ. Катя телефонне манса хăварнă иккен. Паллах, çывăх çиннине тĕрĕслĕхе уçма тиврĕ.

– Эх, хĕрĕм, урăх каччă пулмарĕим? Сивĕн, ачам, кашкăр çăварне лексе ырă кураймăн, – терĕ лăпкăн ăса вĕрентсе хĕрарăм.

Ун чухне Катя амăшĕ мĕншĕн кашамана аса илнине пачах ăнланмарĕ. Ара, Петĕрсен ашшĕ епле хаяррине, амăшĕ усаллине пĕлмерĕçке вăл.

Амăшĕн сăмахĕ витĕмлĕ пекчĕ-ха, анчах Кĕтерук Петĕре хăнăхма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Çакă-ши вăл юрату – каçсерен тунсăхлани, савнине пĕрмай курас килни? Аякри хулана кайсан та Петьăна Катя чăтăмсăррăн кĕтетчĕ. Ăшă сăмахсем шăрçаланă çыру килсен савăнатчĕ.

Хĕрĕ аслă каччăпа çыхланнине ырламарĕ-ха амăшĕ, анчах ачине те çыхса усрамайрĕ. Шкул пĕтерсе хулана кайсан пĕтĕмпех майлашăнасса шанчĕ. Тавах, хĕрĕ каччă тесе пуçне çухатмарĕ, вĕренме пăрахмарĕ.

Анчах... Кĕтмен çĕртен персе анчĕ инкек. Пĕр-пĕрне юратуллă, ăшă сăмахсем калатчĕç çамрăксем. Ăшшăн ыталатчĕç, ачашшăн чуптăватчĕç, анчах унран ытла мар. Алхасма кăмăлĕ пулсан та хăйне тытса чаратчĕ Петĕр. Тепĕр чухне ăнсăртран пĕрре хĕрĕнкĕ килсен çеç аллине ирĕке яратчĕ. Хĕр кӳренем пекки тусан лăпланатчĕ. Пĕррехинче хĕр сăмахĕсем ниме те тăмарĕç çав. Çĕнĕ çул çывхаратчĕ ун чухне. Çанталăк сивĕрен Петĕр Кĕтерука хăнана чĕнчĕ. Хирĕçлемерĕ пике. Ара, çил-тăманран, шартламаран пытанса йĕкĕт кукамăшĕн килне пĕрре мар кĕрсе ларнă иккĕшĕ. Вата çын ачисем патне пĕр-икĕ кунлăха хăнана кайсан паллах.

Нихăçан та усал пулманччĕ Петя. Паянччен. Малтанах турткаланчĕ хĕр, хирĕçлерĕ, анчах савнийĕ ăшăран та ăшă, çепĕçрен те çепĕç сăмахсем пăшăлтатрĕ. Ку ĕç-пуç вĕсен юратăвне çирĕплетессе, хĕре пушшех хисеплеме май парасса шантарчĕ. Те унăн сăмахĕсене ĕненнĕрен, те хирĕçлеме вăйĕ пĕтсе çитнĕрен юлашкинчен хĕр лĕпсĕр пулчĕ...

– Ĕçлеме пĕлмеççĕ, хырăм йăтса килеççĕ, – каллех хуняма карчăк мăкăртатнипе вăранчĕ Катя.

Петя çук чухне ялан çапла, кунĕпех кинне çисе çӳрет. Ывăлĕ е упăшки килте чухне аплах мар-ха, хăйне лăпкăрах тытать. Арçынсем çук пулсан вара виçине те пĕлмест. Мĕн кăна каламасть-ши? Çамрăк арăм хăш-пĕр сăмахĕн пĕлтерĕшне те ăнланмасть, лайăххисен йышĕнчен маррине çеç чухлать.

Ку киле ура ярса пусни икĕ уйăх çеç-ха, анчах пĕр ырă кун курмарĕ кинĕ. Е хунямăшĕ мăкăртатать, е хуняшшĕ çапăçать. Юрать-ха Петĕр халь-халь амăшĕ пулма хатĕрленекен мăшăрĕн хутне кĕрет хăть. Анчах ĕнер вăл укçа ĕçлесе илес тĕллевпе ют хулана тухса кайрĕ. Вăл таврăниччен икĕ эрне ахăр самана пырать халĕ. Епле чăтас? Тепĕр чухне чунне лăплантарма амăшĕсем патне каятьха. Юлашки вăхăтра унта та канлĕх тупаймасть Кĕтерук. Амăшĕ хĕрне хĕрхенсе куççуль тăкнине курсан чĕри çурăлса тухать. Лешĕ те хĕрне хăйĕн сăмахне итлеменшĕн ӳпкелетех.

Катя аттестат илсенех пĕрлешрĕç çамрăксем. Амăшĕ хĕрне хĕрĕх чĕрнеллине пăхмасăр вĕренме кĕме мĕн чухлĕ ӳкĕтлемерĕ пуль. Ара, ун чухне хырăмĕ мăкăрălма та пуçламанччĕ. Мăнукне те хăех пăхма шантарчĕ. Çук, итлемерĕ хĕрĕ. Савнă мăшăрĕнчен пĕр самантлăха та уйрăлас темерĕ. Халĕ акă хунямăшĕн йĕрĕнтермĕш сассине итленĕ май чавси те çывăх пек ĕнтĕ... Çук çав – çыртаймасть.

**Анна НИКОЛАЕВА.**





# Кин кĕртеймерĕмĕр...





Аван-и, вулаканăм! Эсĕ кутемĕн ман çинчен манса кайса та ĕлкĕртĕн пулĕ ĕнтĕ. Карчамас вилсе те кайрĕ-тĕр тесе пăшăрхантăн-тăр. Ан кулян, тăванăм, пурăнатпăр-ха. Тепĕр тесен, паян шăпах пирĕн, карчамассен, пурăнмалла та. Ара, тивĕçлĕ канăва тухса ĕлкĕрнĕ, çичĕ тинĕс леш енчи пенсионерсем пек тĕнче касса çӳремелĕхех мар пулин те, чĕри сури тумалăх пенси укçи параççĕ. Кашни кунах çимесен ĕçмелĕх те пухăнать. Пысăках мар çав пенсийĕ, пысăках мар. Мĕн тăвас тетĕн, çамрăк чухне пурте министрта ĕçлемеççĕ вĕт – ăслă пуç нумай пуль-ха та, пуканĕ шутлă, пурин валли те çитмест. Камăн та пулин тырă та акмалла, тислĕк те хырмалла, унсăрăн сĕтел çине çăкăр та пырса выртмасть, кӳршĕри хусах Ваççана астарса какай яшки те пăсланса лармасть. Вăт çав Ваççашăн чун ыратсах чĕре сылтăм енчен те чикме пуçларĕ ĕнтĕ. Авланасçи тукаласа пăхрĕ-ха та мăнтарăн, тем ăнсах пĕтмерĕ пулас. Пĕри калаланă тăрăх, автанĕ авăтмасть имĕш, теприне тата кĕсье хулăнăшĕ тивĕçтермест, виççĕмĕшĕ Ваççан пур енчен çил вĕрекен шăтăк çуртĕнче шăнса пăсăлма та ĕлкĕрнĕ тет-и? Хĕрарăм тенине шуйттан йăхĕне ахальтен танлаштармаççĕ пуль, йывăртарах пире юрама. Вăт темиçе хĕрарăмпа та тӳшек ăшăтма хăтланса пăхнă хыççăн текех арăм шырама пăрахрĕ Ваççа. Тек ман еннелле пăхкалать. Ăçталла пăхас тата урăх унăн? Автанĕ пирки ялĕпех хыпар сарăлнă хыççăн инке-арăмсем те ун умĕнчен сăмсине вăшт кăна каçăртса ирте-ирте каякан пулчĕç. "Çыпăçма ан та шухăшла" тенине пĕлтерет-ши ĕнтĕ ку? Эпĕ те вара хамăн чăрсăр автана пусас тесе шухăшларăм. Ара, манăн ват çыннăн, ăçтан пĕлсе пĕтерес мĕнлерех автан пирки сăмах пырать унта? Чăххисем ĕнтĕ хам пекех ватăлса çитрĕç, çăмарта тума пăрахрĕç. Çавăнпа та ясар автанпа мĕн тăвас манăн? Кунĕпе ăçта кăна çитмест? Е ялăн пĕр вĕçĕнче куратăп ăна, тепре пăхнă çĕре тепĕр вĕçĕнче чупать... Ваççа патĕнче мĕн шырать-ши тата чупкăнскер? Унăн килĕнче шăши те выçăпа тахçанах çакăнса вилнĕ пуль. Ман енне Ваççа мĕн тесе пăхать тата тетĕр-и? Ара, чăхсене пусма пуçларăм терĕмçке. Яшка мĕнле лăкăр-лăкăр вĕреме кĕрет, тӳрех Ваççа енчи чӳречене яри! уçса хуратăп. Вăл, урăлнă самант тĕлне лексен, тӳрех каллĕ-маллĕ уткалама пуçланине куç хӳрипе сăнатăп хам. Сĕлекине лăнкăрт та лăнкăрт çăтни те аванах илтĕнет тупата. Мĕншĕн – урă чух? Ара, пырне йĕпетсе килсен апат шухăшĕ-и унта?

Хайхи яшка вĕрет, Ваççа кускалать... Эпĕ мĕн, эпĕ те гестапо мар, яшка пиççе çитиччен тесе алла мăлатук тытатăп та картан чалăшса кайнă алăкне тӳрлетме тухатăп. Çапла, гестапо мар эпĕ, анчах та – чăн-чăн тактик. Мăлатукпа виççĕ çапса ĕлкĕрейместĕп, Ваççа сирпĕнсе çитет. Ай, йăпăлтатать, ай, мухтать... Ман пек пултарулă хĕрарăм ялĕпе çук, мĕн тери маттур, çемçе чĕреллĕ... Чӳречерен ялĕпе ырă шăршă сарăлнă чух юхать те юхать Ваççа чĕлхинчен ырă сăмах. Куçĕ вара ман пӳрт алăкĕ çинчен каймасть. Мана мĕн, пĕр виçĕ çăпала яшка шел-им? Çапла майпа карта-хуралта упăшкаллă арăмсенчен те лайăхрах тытса тăратăп эпĕ.

Арçыннисене шел-çке, хĕрарăм курмасăрах ватăлаççĕ хăшĕсем. Пĕррехинче яла хăна хĕрĕ килнĕ. Пирĕн яла лавкка умĕпе иртсе кĕмелле те, хайхисем те унта чарăннă пулать. Çамрăк чух пурте хитре те – лавккана пухăннă хусахсен çăварсем карăлнă, куçсем чарăлнă терĕç. Ара, хăна хĕрне курнипе ĕнтĕ. Хăюллăраххисем янах шăмми чалăшасса та систерне терĕç пĕр-пĕрне. Ăсатма каясмтăвас пулсан. Пĕри те тепри хайхи чиперук патне каçхине çитессине каланă. Халиччен хĕрарăм шăршласа та курман Ванькка та, пĕрре авланса уйрăлма ĕлкĕрнĕ Санькка та. Ваççа, ман кӳршĕ Ваççа ăçта сĕкĕнет-ши тата? Вăл Ванькkапа Санькка сăмсисен умне чукмар пысăкăш чышкине илсе пынă тет – ку хĕр манăн пулать, ăна ăсатма хам каятăп...

Юрĕ-ха, пире çавах, хĕрне чăнласах яла илсе юлсан, Турă пулăшсан, тен, ача сасси те илтĕнĕ пирĕн хутлăхра. Унсăрăн халĕ тепĕр чух урама тухкаласа ларатăн та – никама кăшлама, никама çиме, пурин çинчен те йăлт каласа пĕтернĕ. Вăт çĕнĕ çемье çавăрсан вара, эх, чĕлхе хыçмалли тупăнать. Пирĕн ялăн арçыннисен нумайăшĕн чышки пысăк, кăмăлĕ кăра, пырĕ яка, чĕлхи вара шăрпăклă. Эх, çĕнĕ кин урама кăвак куçпа тухма пуçласса ĕмĕтленме те пуçланăччĕ те... Пулмарĕ вĕт! Чăн та, тепĕр кунне пĕр вăхăт калаçмалăх тупăнчĕ-ха пирĕн пек вăрăм чĕлхеллисем валли. Ара, хайхи çав пике каçхине клуба питĕ хитреленсе пынă тет вара. Ахальтен мар-ха ĕнтĕ, халĕ ялсем – хусахпа, хула ват хĕрпе тулса ларни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Чиперук та яла мăшăр шырасах çитни пирки тухрĕ сас-хура. Анчах ука пек сарă çӳçне кăлăхах кăтралатса тăрăшнă хăна хĕр. Тутине те ахалех писевпе çавăрнă. Ташă каçĕ вĕçленсен ăна ăсатса ярас текен никам та тупăнман. Çук, тиркешмелли çукчĕ-ха ун çумĕнче. Чăнласах пĕр кашăк шывпа çăтса ямалласкерччĕ. Сăлтавĕ урăххипе çыхăннă. Шăп çав кун – эх, ăçтан татăлса аннă-ши мурсем! – пирĕн ялсем Мускавран ĕçлесе таврăннă. Пирĕн яла вара, каларăм ĕнтĕ, лавкка умĕпе иртмелле. Унта вара Мускавран укçапа таврăнакансене "хуралçăсем" сыхласах тăраççĕ. Ну, шăварнă вара яла юлнисене шапашникесем. Çапла пурăнма вĕренсе кайрĕç-ха та пирĕн ялăн арçыннисем. Укçа ĕçлесе илсе килеççĕ те вăл пĕтиччен урăлмасăр ĕçеççĕ. Мухмăр чĕртмелĕх те юлмасан татах кутамккисене çакса вăрăм çула тухаççĕ. Вăт çав йӳçĕ шĕвеке пулах кинсĕр юлтăмăр вĕт. Ман кӳршĕ Ваççаран темех пулмасан та Ванькkапа Санькkана шаннăччĕ-ха ĕнтĕ. Ара, ирхине кăна лавкка айккинче хĕр пайласа пĕр-пĕрне тӳпеленĕ кăна терĕç те... Каçхине вара хăйсем хĕр ăсатма каймашкăн мар, ташă каçне те çитеймен... Эх, пулмарĕ матькасси, яла çĕн çын кĕртесси!

**Халĕ те ниепле те лăпланса çитеймен ХРЕСТИН.**



# Туслăх пытăр-и малта?




Тус-тăван пекех ялта
Эпир хапăл хаçата.
Çамрăксемшĕн – чун ăшши,
/Ваттисемшĕн мĕнле-ши?/

Килĕр-килĕр, иртĕрех,
Килĕренех çитĕрех...
Эпир сире тараватт,
Сирте – пирĕн вăй-хăват.

Хыпăнать ялта ватти:
Хаçат çук та – çук латти.
Çырăн, вула чăвашла,
Сан чăн чăваш пулмалла.

Чăваша упрамалла,
Чăвашла сывламалла!
Ваттисен çапла сăмах:
Ăслă пул, ан юл ухмах!

Килĕр-килĕр, иртĕрех,
Ах, хаçатсăр кичемрех.
Вăхăт тупăр калаçма,
Йăпатма, чуна уçма.

Чи асли, паллах, "Хыпар",
Ят-сумпа çӳле хăпар.
Ыттисем – ун ачисем...
Çĕнĕ пурнăç калчисем...

Пил – "Чăваш хĕрарăмне",
Çул – "Çамрăксен хаçатне",
Пуç таятпăр "Сывлăхне",
"Кил... хушма хуçалăхне".

Кĕр мăнтăрĕн кĕреки,
Саркалан, чăваш пики.
Ырă кăмăл, чун уççи,
Сывă пултăр çăраççи.

Йăл кулать ыр сунакан,
Тараватт халь вулакан.
Тав "Чăваш хĕрарăмне" –
Хĕрарăмсен хаçатне.

Эх, çаврăнать, çаврăнать
Черет курки çаврăнать...
Кăпăклă урпа сăри
Тăван-пĕлĕшĕм, тавсси!

Кил ăшши ытамĕнче,
Сумлă çынсен йышĕнче
Пархатарлă чăвашсем
Яланах – шыравçăсем.

Мухтав Рита Артие!
Çирĕп тытать калеме.
Шутăр пурнăç урапи,
Ан хавшатăр тилхепи!

Уççăн юхтăр калаçу,
Сăн-питре сан çураçу.
Хаклать, чăнах, вулакан,
Йышланать çырăнакан.

Çӳресе ялтан яла,
Шӳтлесе те калаçса
Çырăнаççĕ статьясем,
Çуралаççĕ очерксем.

Çепĕç чунлă Тумалан...
Тăвалла çеç тапалан.
Канăç çук пĕртте, чăнах,
Хисеплет кашни çынах.

Туятăр-и – аптраман
Лавне туртать Атаман...
Çĕн Ахпӳрт те Çĕн Шуртан
Тата ытти – кăмăлтан...

Тăсса ятăм купăса,
Елен, ил шăрантарса.

Тăпăр-тăпăр тăпăртик
Канса ил-ха эс пăртик.

Ал тытать сана Тăвай,
"Кĕтерукăн тус нумай..."
Хаçатçăсен тусĕсем –
Таня пек чиперкксем.

Урăх мĕн ман такмаклас?
Редакцие тав тăвас!
Çак "Чăваш хĕрарăмне"
Вуласчĕ-ха ĕмĕрне!

Тус-тăван пекех пулар,
Ташлар, юрлар, савăнар.
Пĕчĕк йыш, сире калам:
"Трак енчен – хĕрӳ салам!"

Çырăнатпăр хаçата,
Туслăх пытăр-и малта?
"Укçа-тенкĕ çук" тесе
Тăрар мар чееленсе.

**Георгий ЕФИМОВ-ТУСЛИ.**
Красноармейски районĕ.

*"Чăваш хĕрарăмĕ" хаçата халалланă такмаксен конкурсне ыттисен хайлавĕсене те кĕтетпĕр.*



## ЛĔП-ЛЕП




● ÇĔНĔ ШУПАШКАРСЕМ "Ă" САСПАЛЛИПЕ ТЕ "ТУСЛĂ"...
Роза ВЛАСОВА сăнӳкерчĕкĕ.

**Упăшкаран уйрăлса киле таврăнтăм. Халĕ ирсерен анне ман валли – вĕри апат, атте машина ăшăтса хатĕрлет. Качча тухмастăп урăх…**

* * *

**– Анне, эсĕ мана мĕншĕн "Одноклассники" сайтра "хура списока" кĕртнĕ?**

**– Ара, санран вĕçĕмсĕр спам килме пуçларĕ те…**

**– Мĕнле спам???**

**– Ну… "Мана çĕнĕ куртка кирлĕ", "Ыран кинона каясшăн – укçа пар-ха" йышшисем…**

* * *

**– Кума!**

**– Мĕн?**

**– Эсĕ питӳпе студене кĕрсе выртнă!**

**– Вара мĕн?**

**– Оливьене куçса выртнă – шăнса пăсăлăн тата.**

## ☺ И-ХИ-ХИК ☺

* * *

**Арçынсем вĕтелсе пыни çакăнтан та курăнать – кӳршĕ патне тăвар ыйтма каçсан чăнласах тăвар парса ярать…**

* * *

**Карчăкпа старик урамра лараççĕ.**

**– Эсĕ ас тумастăн пулĕ-ха, – тет старик, – шкулта вĕреннĕ чухне Верка Семеновăна питĕ юрататтăм. Халĕ ăçта-ши çав хĕр пĕрчи?**

**– Эсĕ мĕн, аташнă-им? – тет карчăк. – Верка Семенова эпĕ вĕт вăл.**

* * *

**Виççĕри мăнукне кинемей çу уйăхĕнче çăматăпа илсе тухнă уçălма.**

**– Эсĕ мĕскер, мăнуку шăнасран хăратăн-им? – ыйтаççĕ кӳршисем.**

**– Çăматăсăр юрамасть – хăваласа çитейместĕп, – ăнлантарть кинемей.**

* * *

**Чирли – тухтăр патĕнче:**

**– Калăр-ха, эсир мĕнле çывăрса каятăр? – ыйтать шурă халатли.**

**– Виççĕччен шутлатăп та…**

**– Мĕнле? Виççĕччен кăна-и?**

**– Ну, тепĕр чухне тăватă сехет те çитсе каять çав…**

* * *

**Эпĕ тăваттăмĕш хутчен качча тухнă чухне ЗАГСра тупа сăмахĕсене каланă чух манăн чи çывăх тусăм кулса вилетчĕ.**

* * *

**Социаллă сетьре палламан арçынран çыру килчĕ: "Сан çинче мĕн пур?" – тет. Мĕн пур, мĕн пур – ипотека, кредит тата ача! Хирĕç хурав пулмарĕ…**

* * *

**– Çывăх тăванпа савăшма юрать-и?**

**– Çук, паллах!**

**– Вăт эпĕ та арăма çавнах калатăп та… Вăл вара "юрать" те "юрать" тет…**

* * *

**– Сэр, нумаях пулмасть Расçей тăрăх çӳрерĕм…**

**– Мĕнле пек туйăнчĕ вара сире вăл çĕршыв?**

**– Тĕлĕнмелле кая юлса аталанса пырать. Каласан та ĕненмĕр – унта арçынсем халĕ те хĕрарăмпа çывăраççĕ…**

* * *

**Шкулта ашшĕ-амăшĕн черетлĕ пухăвĕ пуласси не, паспорта пĕрле илмеллине каларĕç. Ахăртнех, вырăнтах кредит илмелле пулать.**

* * *

**Урааа!!! Эпĕ ача кĕтетĕп!!! Пĕрре кăна та мар – йĕкĕреш!!! Тата… тата… кĕçех качча тухатăп! Саламлама пултаратăр – упăшка пуласси пуян – машинăллă, хваттерлĕ! Хам пĕлместĕп-ха, кӳршĕсем калаçаççĕ. Вĕсене шанмасăр тăма вара манăн нимĕнле сăлтав та çук.**

* * *

**Çĕрле. Арçын тĕкĕр умĕнче капăрланса тăрать. Чаплă костюм тăхăннă хăй, галстук çыхнă.**

**– Ăçта каятăн вара эсĕ капла? – ыйтать арăмĕ.**

**– Пулла, – лăпкăн хуравлать арçын. – Ман хыççăн алăка питĕрсе юл.**

**Хĕрарăм пĕр сăмах та чĕнмест, çывăрмалли пӳлĕме каять. Арçын хваттертен тухса ĕлкĕриччен арăмĕ питĕ хитре тăхăнса алăк патне çитсе тăрать. Çӳçне илемлĕ пуçтарнă, сăрланнă…**

**– Эсĕ çĕрле ăçта пуçтарăнатăн капла? – куçĕ чарăлать арçыннăн.**

**– Дачăна, йăран чавма…**

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ


### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 32 руб., 12х20х40 – 27 руб., 9х20х40 – 23 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-307-31-51.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич**, блоки. Т. 89613393363.

**20.Кирпич:** красный, цветной, облиц. Скидки. Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**24.ГРАБЛИ, косилки,** сажалки, копалки, окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.КИРПИЧ** М125, М150; **керамблок.** Доставка. Т. 89033220208.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, бетонные отходы, навоз.** Доставка по низким ценам. Т. 8-927-850-28-21.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**800.ДОМ** в любом состоянии. Т. 8-902-663-90-45.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-967-471-50-70.

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

### ĔÇ/РАБОТА

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам, 28-83-70, 56-04-17.


# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Степан Аслан романĕ. 5. Арманта тырă ...аççĕ. 8. ...-кунтан. 9. Пĕтĕм тĕнчери полици – ... пол. 10. Кăткăс /антоним/. 11. Абакан çынни. 12. Юмах-сăвăри чалăш уралла упа. 13. Владимир Ильич .... 14. Америкăри страус. 19. Пулни-иртни, паянхи кунçул. 20. Пуçăмри шур ... мамăклăрах пулинччĕ /фольк./. 21. Байкал кӳллинчен юхса тухакан юханшыв. 22. ... уралла пукан.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Математика пайĕ. 2. Раççейри 18-мĕш ĕмĕрти хулари хăйтытăмлăх органĕ. 3. «Сĕве Атăла юхса кĕрет» роман авторĕ. 4. Вăл графинпа юнашар ларать. 5. Ыйхă килсен çăвар карăлни. 6. Кĕвĕçӳ. 7. Çапла калаçакан çынна вырăссем «заика» теççĕ. 15. А.Пушкин нянин ячĕ. 16. Италин авалхи кĕмĕл е ылтăн укçи. 17. Паспорт çинче – Владимир, юлташсем хушшинче – .... 18. Вăл уявсенче çилпе вĕлкĕшет.




**Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла:** 3. Калуш. 6. Барселона. 9. Шикли. 10. Автан. 11. Конго. 12. Аркан. 15. Картограф. 16. Парне. **Аялалла:** 1. Касса. 2. Çулла. 4. Павлоград. 5. Универмаг. 7. Мирон. 8. Шалаш. 13. Утрав. 14. Агент.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 27.11.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7596. Заказ 4596.